**Глава Чувашии встретился с гостями фестиваля поэзии народов России «Атӑл Асамачӗ»=Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев «Атӑл Асамачӗ» Раҫҫейри халӑхсен фестивалӗн хӑнисемпе тӗлпулу ирттернӗ**




Ҫу уйӑхӗн 31-мӗшӗнче Правительство ҫуртӗнче Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ **Михаил Игнатьев** «Атӑл Асамачӗ» Раҫҫей халӑхӗсен поэзин фестивальне хутшӑнакансемпе тӗл пулнӑ. Кӑҫал мероприятине И.Я.Яковлев ҫуралнӑранпа 170 ҫул ҫитнине халалланӑ.

Фестиваль пирӗн регионта икӗ кун хушши пырать. Унта Чӑваш Енрен, Тутарстанран, Пушкӑртран, Удмуртирен, Дагестанран, Марий Элран, Комирен, Мордовинчен, Ульяновск тата Астрахань облаҫӗсенчен сумлӑ хӑнасем килме кӑмӑл тунӑ. Культура ӗҫченӗсем пирӗн регионӑн йӑли-йӗркипе, халӑх поэчӗсемпе, вӗсен тавра курӑмлӑхӗпе паллашнӑ. Хӑнасем хӑйсен шухӑш-кӑмӑлне пӗлтернӗ регион Ертӳҫине. Ӗҫлӗ тӗлпулӑва пухӑннисем пӗр-пӗрин паха опычӗсемпе паллашса пыма калаҫса килӗшнӗ, шкул программине наци поэчӗсен пултарулӑхне кӗртсе, ачасене вӗрентсе пырсан питӗ ӑнӑҫлӑ пулнӑ пулӗччӗ тенӗ. Вулавӑшсене те хайлавсене илсе ҫитерсен аван тенӗ хӑнасем сӑмаха малалла тӑснӑ май.

Ӑс-хакӑл тӗнчине аталантарса пырас ӗҫ приоритетлӑ ыйтусенчен пӗри пулса тӑнине асӑннӑ **Михаил Игнатьев**. Ҫитӗнекен ӑрӑва йӑла-йӗркене вӗренсе пыни, вӗсен шухӑш-кӑмӑлне ырӑ енне куҫарса пыма витӗм кӳнине те палӑртнӑ вӑл калаҫӑва малалла тӑснӑ май. Регионсем хушшинчи ҫыхӑну ҫав тери пысӑк пӗлтерӗшлӗ тенӗ хӑнасем. Республика Пуҫлӑхӗ те ҫакна ырланӑ.

«Атӑл Асамачӗ» фестиваль паян вӗҫленет, вӑл икӗ кун пынӑ пирӗн тӑрӑхра. Наци вулавӑшӗнче поэтсем хӑйсен пултарулӑхӗпе паллаштарӗҫ, ӑна халӑх патне илсе ҫитерме тӑрӑшӗҫ. Регионти пултарулӑх ушкӑнӗсем хӑйсен сӑвви-кӗввисемпе савӑнтарӗҫ.

**Источник: Портал органов власти Чувашской Республики**